

# Иван Мучи – кулăш министрĕ

**Чăваш çыравçи Иван Мучи çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май**



**Иван Мучи (Иван Иванович Илларионов) 1895 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Чуралькасси (халĕ Тойтерек) ялĕнче çуралнă. Ялти шкулта, Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕреннĕ.**



**Граждан вăрçине хутшăннă.**

**Граждан вăрçи хыççăн Хусанти пĕрремĕш чăваш театрĕнче артист пулса ĕçленĕ.**

**1922 çулта театрпа пĕрле Шупашкара куçса килнĕ. Пĕр вăхăт «Канаш» хаçат редакцийĕнче вăй хунă.**



Иван Мучи журналистсемпе. 1924



Иван Мучи Чăваш театрĕн артисчĕсемпе. 1927

**1922 çулта театрпа пĕрле Шупашкара куçса килнĕ. Пĕр вăхăт «Канаш» хаçат редакцийĕнче вăй хунă.**



„КАНАШ“ хаçат çумĕнче тухать.

# КАПКĂН

1-мĕш №

## КИНЕМАТОКРĂХ.

Хура Урэ.




**И.Мучи чăвашсен сатира журналне — «Капкăна» пуçласа яраканĕ пулнă. Вунпилĕк çул ытла çак журналăн яваплă секретарĕнче ĕçленĕ.**



**Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче И.Мучи Чăваш академи театрне ĕçлеме куçнă. Иван Мучи талантлă артист, чăваш литературинче сатирăпа юмор жанрне пуçараканĕ, ăста прозаик пулнă.**

**Иван Илларионов вырăс хĕрне Елена Мочаловăна качча илнĕ. Мăшăр Людмилăпа Олимпие кун çути парнеленĕ.**



Иван Мучи Людмила хĕрĕпе. 1934



Чăваш çиравçисем. 1925

**Литературăри çитĕнӳсемшĕн ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.**

**Иван Мучи 1934 çултанпа СССР Писателĕсен союзĕн членĕ пулнă.**

**Писатель 1946 çулхи ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче сарăмсăр вилсе кайнă.**



**Тойтерек ялĕнче Иван Мучие халалласа лартнă палăк**

# Паллăрах кĕнекисем























# Иван Мучи – кулăш министрĕ

**Чăваш çыравçи**
**Иван Мучи çуралнăранпа**
**120 çул çитнĕ май**